# СОДЕРЖАНИЕ

Пĕрремĕш сыпăк

## Пĕрремĕш сыпăк

*Пӳрнеске ăçта пурăнать? Мăкăнпи ятлă пĕчĕк хĕре тĕл пулни.*
*Пӳрнеске патпне Мăкăнпи пурăнма куçатъ.*

Ку вăл, ачасем, Атăл ятлă аслă шыв хĕрринче пулса иртнĕ. Атăл шывĕ калама çук сарлака. Пĕр çырантан тепĕр çыранĕ кăшт çеç курăнать. Атăл тăрăхĕнче вара, хăвăрах пĕлетĕр ĕнтĕ, мĕн авалран çапла тĕлĕнмелле ĕçсем пулса иртеççĕ.

Аслă Атăл варринче пĕчĕк утрав пур. Çак утрав йĕри-тавра питĕ ăшăх. Çавăнпа кунта ни пăрахутсем ишсе килеймеççĕ, ни пулăçсем пул тытма çӳреймеççĕ. Утрав çинче пĕрре пăхма никам та пурăнмасть тейĕн çав, питĕ шăп кунта.

Чим! Такам пур мар-и кунта? Çапла, çак утрав çинче Пӳрнеске ятлă пĕчĕк пукане пурăнать. Мĕншĕн Пӳрнеске тесе чĕнеççĕ тетĕр-и? И-и, чухлас пулать ĕнтĕ, ара, çак пукане чăннипех те пуç пӳрне пысăкăш çеç. Çавăнпа ячĕ те Пӳрнеске ĕнтĕ унăн. Тепĕр чухне эсир, ачасем, ун умĕпех ăна курмасăрах иртсе кайма пултаратăр, ара, пуç пӳрне пысăкăшскере ăна асăрхасси те çăмăл мар.

Пӳрнеске кунта пĕр-пĕччен пурăнать. Вăл йывăç-курăкпа питĕ туслă, ирсерен сывлăм шывĕ ĕçет, кăнтăрла вара апат-çимĕç хатĕрлеме утрав варринелле тухса каять. Унăн кунта хăйĕн тĕнчи, хăйĕн сунар кайăкĕсем, хăйĕн выльăх-чĕрлĕхĕ. Кăткăсем ăна хăйĕн сĕтне параççĕ, чавкапуç чечекĕнчен вăл пыл пухать, премĕк курăкне вара çăкăр вырăнне çиме пултарать. Çапла çул çӳресе таврăнать те Пӳрнеске хĕвел ансан пӳртне кĕрет. Сывăрма выртать. Чӳречисене те, алăкне те вăл нихăçан та питĕрмест, мĕншĕн тесен унăн пӳрчĕ умĕнче çĕрĕпех шăрчăксем сĕрме купăс калаççĕ.

Пӳрнескене ыйхăран шăнкăрав чечекĕсем шăнкăр-шăнкăр шăнкăртатса вăратаççĕ.

«Пăхма мĕнлерех вара вăл Пӳрнеске?» – тетĕр-и?

Пăхма вăл, ачасем, пирĕн пекех. Çавра питлĕ, каçăр сăмсаллă, хура куç харшиллĕ. Куçĕ хăйĕн хăмăр та самаях хăнчăр. Ара, пукане куçĕ çапла пулмалла та. Пурне те курмалла та-ха унăн, атту пĕри-пĕри ăна тепĕр чухне таптаса та кайма пултарать... Çамки хайхискерĕн пысăк. Ара, ырă пуканесен çамки пысăк пулмалла ĕнтĕ, мĕншĕн тесен унăн нумай шухăшламалла, инкеке лекнĕ кашни чĕрĕ чуна епле пулăшассине пĕлмелле. Хăлхи те Пӳрнескен пысăк. Ара, тав-рара пулса иртнине йăлтах илтмелле ĕнтĕ. Питçăмартийĕ вара пиçсе çитнĕ улма пек. Тути хулăн. Пуçне вăл шĕвĕр вĕçлĕ калпак тăхăннă. Калпакне унăнне юман хуппинчен Каюра тусĕ çĕлесе панă. Калпакĕ çине вăл яланах чавкапуç курăкĕ тăрăнтарса лартать, вара пĕр-пĕр авалхи çар пуçĕ пекех туйăнать. Унăн калпакĕ çинчи чавкапуç курăкĕ çине час-часах ывăннă пыл хурчĕсем вĕçе-вĕçе пыраççĕ, унта ларса канаççĕ, нектарне пухса апат тăваççĕ те малалла пыл пуçтарма вĕçсе каяççĕ...

Пӳрнескен халачĕ те питĕ хитре, шап-шурă. Тĕррине, тĕррине пăхăр-ха, ачасем, − епле хитре тĕрĕ пур ун халачĕн аркинче! Халата ăна лĕпĕшсем тĕрлесе панă. Эсир пĕлетĕр пуль ĕнтĕ, лĕпĕшсем ку утрав çинче чи ăста художниксем шутланаççĕ. Вĕсем епле художник пулса кайнине пĕлес тетĕр-и тата? Ăна та калам, эппин. Тахçан ĕлĕк лĕпĕшсем пурте пĕр тĕслĕ, шап-шурă пулнă. Пĕррехинче çапла лĕпĕш чĕппи хăй амăшне паллайман та, ара, пурте пĕр тĕслĕ те-ха вĕсем, паллайман та ют çĕре лекнĕ. Кунта икĕ лĕпĕш пурăннă, вĕсен ачи-пăчи пулман. Вĕсем вара хăйсем патне çапла лĕпĕш чĕппи лекнĕшĕн савăнсах кайнă, ăна усрава илес тенĕ. Çакăн çинчен, чĕппи аташса кайса урăххисем патне лекни çинчен, амăшĕ пĕлнĕ те часрах унта вĕçсе пынă. Анчах лешсем чĕппине парасшăн мар, пирĕн пата вăл хăй килсе лекрĕ, тенĕ. Лĕпĕш амăшĕ чĕппине часрах тăван килне илсе каясшăн пулнă. Хайхи хирĕçӳ тухса кайнă. Пĕчĕк лĕпĕшĕ те, паллах, тăван килне туртăннă ĕнтĕ.

− Анне, аннеçĕм! − тесе кăшкăрнă вăл вĕçĕмсĕр. Амăшĕ, паллах, ăна хăйпе илсе кайнă ĕнтĕ.

Çавăнтан пуçласа вара, чĕпписем хăйсен амăшне часрах палласа илмелле пултăр тесе, кашни лĕпĕш çунаттисене хăй евĕрлĕ сăрлама тытăннă. Акă мĕншĕн тĕрлĕ тĕслĕ, тĕрлĕ

тӗрӗллӗ лӗпӗшсем пур ӗнтӗ ҫӗр ҫинче. Акӑ мӗншӗн лӗпӗшсем ӑста художник пулса тӑнӑ ӗнтӗ...

Пӳрнеске халачӗ ҫийӗнчен пилӗкне вӑрӑм, илемлӗ пиҫҫихине ҫыхнӑ. Пиҫҫихийӗ те унӑн хайне евӗрлӗ, ӑна вӑл ҫӳҫе куракӗнчен явса тунӑ. Кун пек хитре те вӑрӑм ҫӳҫе курӑк ҫак утрав ҫинче кӑна ӳсет.

Урине пукане хӗрлӗ атӑ тӑхӑннӑ. Атти те унӑн ытарма ҫук чипер, кунчисене шурӑ йӗрсемпе те ҫаврашкасемпе илемлетнӗ. Ку та лӗпӗшсен ӗҫех. Ҫапла пӗр лӗпӗшӗ унӑн халатне илемлетнӗ чухне астумасӑр сӑррине тӑкса янӑ. Сӑррине утравӑн тепӗр енчен шӑрчӑксем пӗчӗк урапапа тин ҫеҫ турттарса килнӗ пулнӑ. Темиҫе пӗрчӗ сӑрӑ Пӳрнескен атти ҫине те ӳкнӗ. Лӗпӗш ҫакна курнӑ та вара унӑн аттине тӗ сӑрлас тенӗ, шурӑ йӗрсемпе те ҫаврашкасемпе илемлетме тытӑннӑ.

Чим, эпӗ сире тата чи кирли ҫинчен калама маннӑ-ҫке. Пӳрнескен тата хӗҫ, чӑн-чӑн хӗҫ пур. Ана вӑл яланах хӑй ҫумӗнче ҫакса ҫӳрет. Хӗҫӗн аврине ылтӑнпа, йӗннине кӗмӗлпе илемлетнӗ. Ылтӑнӗ-кӗмӗлӗ вара хӗвел ҫинче ытарайми ҫиҫсе ялкӑшать. Ҫав ырӑ кӑмӑллӑ пӗчӗк пуканене хӗҫ мӗн тума кирлӗ тесе ан шухӑшлӑр. Ырӑ кӑмӑллӑ пулнӑ пиркиех хӗҫӗ кирлӗ те ӗнтӗ ӑна, ара, унӑн мӗн чухлӗ пӗчӗк чӗрӗ чуна усал-тӗселтен сыхлама лекет... Хӗҫӗ пурри пиркиех ӗнтӗ Пӳрнеске яланах пур усал-тӗселе те хирӗҫ тӑма, кашни мӗскӗн чӗрӗ чуна кирлӗ чухне пулӑшма пултарать. Акӑ мӗнле пукане вӑл ҫав аслӑ Атӑл варринчи пӗчӗк утрав ҫинче пурнакан Пӳрнеске.

Халӗ ӗнтӗ эпир, ачасем, Пӳрнеске мӗнле кӑмӑллине, мӗнле тумлине, мӗнле сӑнлине пӗлтӗмӗр. Халь ӗнтӗ эпир ӑна кирек ӑҫта курсассӑн та палласа илме пултаратпӑр. Ҫапла-и?

Пӗррехинче Пӳрнеске ирхине ирех, шӑнкӑрав курӑкӗсем шӑнкӑр-шӑнкӑр шӑнкӑртатма тытӑнсанах, вӑранчӗ те лайӑх ҫавӑнса тумланнӑ хыҫҫӑн пахчине тухрӗ. Сасартӑк вӑл чӳрече умӗнче халиччен курман чечеке асӑрхарӗ. Чечекӗ пысӑк... Тӗлӗннипе Пӳрнеске чечеке унтан та пӑхрӗ, кунтан та пӑхрӗ. Сасартӑк:

− Аван-и, Пӳрнеске! − тени илтӗнчӗ.

− Кам ку? − тӗлӗнчӗ Пӳрнеске. − Ара, никам та ҫук-ҫке кунта. − Пӳрнеске тӗлӗннипе хӑлхисене сиккелентерсе илчӗ. Йӑли ҫапла унӑн. − Чим, сасӑ ҫакӑнтан илтӗнчӗ мар-и? Ак япала! Епле тӗлӗнмелле чечек. Ку, тем, ахальтен капла мар. Кунта такам ҫук пулӗ те. Чим, сӑнасах пӑхам-ха... − Пӳрнеске чечек ӑшне пӑхас терӗ ҫеҫ, лешӗ ҫӳлелле, ҫӳлелле ӳсме тытӑнчӗ.

Эй, тӗлӗнтермӗш! − терӗ те Пӳрнеске нимӗн тума пӗлеймесӗр шухӑша кайрӗ.

Ҫав хушӑра каллех сасӑ илтӗнчӗ.

− Аван-и, Пӳрнеске! Эпӗ ку. Эпӗ, пӗчӗк херача. Мана Мӑкӑнпи тесе чӗнеҫҫӗ. Ку чечек − манӑн ҫуртӑм.

− Эпӗ вара − пӗчӗк пукане, − тесе хуравларӗ Пӳрнеске. Унтан чӑтаймарӗ, хуллен ҫапла ыйтрӗ: Итле-ха, эсӗ мӗнле лекнӗ унта?

− Эпӗ кунта ҫуралнӑ, − кӑмӑллӑн хуравларӗ пӗчӗк хӗр, унӑн сасси пуканене хитре юрӑ пекех илтӗнчӗ.

− Ку мӗнле чечек пулчӗ вара? Тем, паллаймарӑм ӑна. Кун пек чечек утрав ҫинче халиччен ӳсместчӗ мар-и? терӗ Пӳрнеске хӗрача ҫинчен тӗплӗнрех пӗлес шутпа.

− Ку чечеке мӑкӑнь теҫҫӗ. Мана ҫавӑнпа, ҫак чечек ӑшӗнче ҫуралнипе ӗнтӗ, Мӑкӑнпи теҫҫӗ, - ӑнлайтарса пачӗ пӗчӗк хӗрача кӑмӑллӑ сассипех.

− Мӑкӑнпи, − терӗ Пӳрнеске, − ан ман пата. Атя пӗрле выльӑпӑр.

− Хӑвпа пӗрле выляттарас тетӗн пулсан, санӑн мана сывлӑх сунмалла, вара хӑв патна тухма ыйтмалла. Ун чухне тин ман ҫурт аялалла анӗ.

− Сывлӑх сунатӑп, Мӑкӑнпи, − терӗ Пӳрнеске савӑнса кайсах. − Тух ман пата.

Ҫакӑн хыҫҫӑнах чечек аялалла анса-анса пыра пуҫларӗ, акӑ, ҫӗр патнех ҫитрӗ. Хайхи мӑкӑнь ҫеҫки уҫӑлса кайрӗ те унтан пӗчӗк хӗрача сиксе тухрӗ. Вӑл хӗрлӗпе сарӑ ҫипрен тӗртнӗ пусмаран ҫӗлетсе тунӑ икӗ аркӑллӑ кӗпепе, хӑйӗн ҫивӗчӗ вӑрӑм, пуҫӗнче хӗрлӗ тутӑр. Пичӗ-куҫӗ вара ытарма ҫук хитре.

Пӳрнеске хӗрача патне чупса пычӗ те ӑна ачашшӑн сылтӑм аллинчен тытрӗ. Вара иккӗшӗ ташлама, сиккелеме тытӑнчӗҫ. Вӗсем савӑннине шӑрчӑксем курчӗҫ те тӳрех хайсен

сĕрме купăсĕсене калама тытăнчĕç. Мăкăнпипе Пӳрнеске вара кĕвĕ май ташларĕç те ташларĕç.

Выляна-ташлана май вĕсем хăйсене валли юрă та шутласа тупрĕç:

*Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать те,*
*Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать.*
*Шăнкăрч чĕппи шыв ĕçет те,*
*Шăнкăрч чĕппи шыв еçет.*
*Ян-ян каять, сас каять те,*
*Ян-ян каять, сас каять.*
*Пирен маттур сасă ку та,*
*Пирĕн маттур саса ку.*
*Пӳрнескепе Мăкăнпи те,*
*Пӳрнескепе Мăкăнпи*
*Иккĕш вăиă выляççĕ те,*
*Иккĕш вăйă выляççĕ...*

Юррине юрласа пĕтерсен вара Мăкăнпи:

− Ай, юлташ пулсан, выляма та мĕн тери лайăх! - терĕ.

− Эпĕ те пĕччен пурăнса йăлăхса çитрĕм, − хăй шухăшне каламасăр чăтаймарĕ Пӳрнеске.

Вĕсем иккĕшĕ те выляма чарăнчĕç.

− Канар-ха кăштах, - терĕ хĕрача.

− Канар, эппин. Каннă май кăштах калаçăпăр та. Кала-ха, Мăкăнпи, чечек ăшĕнче пурăнаканскер, эсĕ йывăç-курăка питĕ юрататăн пулĕ?

− Юратмасăр! Мĕн тери хитре йывăç-курăк ӳсет те, ара. çĕр çинче. Эсĕ те йывăç-курăка юрататăн-и?

− Эпĕ те юрататăп. Çавăнпа çак утрав çинче пурăнатăп та ĕнтĕ. Итле-ха, Мăкăнпи, атя ман пӳрте кайса курар.

− Атя. Анчах та каялла килнĕ чухне аташса каймăп-ши эпĕ?

− Çук, эпĕ сана ăсатсах ярăп. Кунти кашни тĕмескене лайăх пĕлетĕп эпĕ.

− Апла атя, кайăпăр.

Пӳрнеске Мăкăнпие аллинчен çавăтрĕ те хăй пӳрчĕ патне илсе кайрĕ. Вĕсем пӳрте шалах кĕчĕç.

− Ай, мĕн тери хитре çурт! − савăнса кайрĕ Мăкăнпи Пӳрнеске пӳртне курсан. – Мĕн тери пысăк! Пурăнма та ирĕк кунта.

Пĕчĕк хĕр аллине çупса илчĕ те çил кăларса ташлама тытăнчĕ. Унăн кĕпи арки çиле пула кăшт çĕкленчĕ те чутах ăна çӳлелле вĕçтерсе каймарĕ. Юрать Пӳрнеске хĕрачана аллинчен тытса ĕлкĕрчĕ.

− Ой, тавтапуçах, Пӳрнеске. Эсĕ питĕ ырă кăмăллă, чăн-чăн тус, – тав турĕ ăна Мăкăнпи.

Пӳрнеске хăйне мухтанипе вăтанса кайрĕ те ним сăмах чĕнме те пĕлмерĕ.

− Ман пӳртре, чечек ăшĕнче, тăвăртарах çав кăштах.

− Апла ман пата пурăнма юл, Мăкăнпи. Пире кунта иксĕмĕре те питĕ лайăх пулĕ. Ман пӳртĕм аслă.

− Хаваспах юлатăп, Пӳрнеске.

− Юл, юл, Мăкăнпи. Эпир иксĕмĕр питĕ килĕштерсе пурăнăпăр. Юрать-и? Ирсерен эпĕ тăрса тумланăп та хамăра валли çимешкĕн пыл пуçтарăп.

− Эпĕ вара киле юлăп та сана кĕтĕп. Юрать-и? Эсĕ килессе кĕтсе юрла-юрла пӳрт-çурт ăшчиккине илемлĕ чечексемпе хитрелетĕп, кантăксене шăлса кайăп. Çапла кун хыççăн кун иртĕ, эпир иксĕмĕр калама çук телейлĕ пулăпăр.

Мăкăнпи Пӳрнескене аллинчен тытрĕ те юрласа ячĕ:

*Шăнкар-шăнкар шыв юхать те,*
*Шăнкар-шăнкăр шыв юхать.*
*Шăнкăрч чĕппи шыв ĕçет те,*

*Шăнкăрч чĕппи шыв ĕҫет...*

Иккĕмĕш сыпăк

*Мăкăнпипе Пӳрнеске инкеке лекнĕ Лĕпĕше ҫăлаççĕ. Ҫĕр пус пуличчен ҫĕр тус пултăр тени тĕрссси палăратъ. Тискер эрешменпе ҫапăҫни.*

Пĕррехинче Мăкăнпипе Пӳрнеске пӳртĕнчен тухрĕҫ. Сасартăк вăйсăррăн кăшкăрни илтĕнсе кайрĕ:

− Пулăшăр! Пулăшăр!

− Такам пулăшу ыйтать мар-и? − терĕ те Пӳрнеске лайăхрах илтес тесе ик хăлхине чанках! ҫӳлелле ҫĕклерĕ.

− Ой, хăратăп эпĕ! − ҫӳҫенсе илчĕ Мăкăнпи. – Пирĕн утрав ҫине тăшмансем тапăнмарĕҫ пуль те...

− Ан хăра, − лăплантарма васкарĕ ăна Пӳрнеске. − Хамăр утрав ҫинчех тăшманран хăраса тăмăпăр-ха. − Вăл ҫавăнтах хĕҫне йĕннинчен туртса кăларчĕ. Хурҫă хĕҫĕ хĕвел ҫинче ҫиҫĕм пек ялтăраса илчĕ. – Тăшмана эпир ăна ак ҫак хурҫă хĕҫпе ăса кĕртĕпĕр! – кăшкăрса ячĕ паттăр пукане.

− Пулăшăр! Пулăшăр! – каллех илтĕнчĕ кăшкăрнă сасă.

− Ой, чăнах та такам пулăшу ыйтать! Ун сассине эпĕ те илтрĕм! – терĕ Мăкăнпи.

− Апла ăна пулăшмалла! – хĕҫĕпе сулса кăшкăрса ячĕ Пӳрнеске. – Ав ҫав енчен, кăнтăртан илтĕнетунăн сасси.

Пукане часрах сасă илтĕннĕ енне чупса кайрĕ.

− Чăнах та сасă ҫав енчен илтĕнет! − терĕ те Мăкăнпи Пӳрнеске хыççăн ыткăнчĕ.

Вĕсем кăвак ҫеҫкеллĕ утмăлтурат патне чупса ҫитрĕҫ. Чечек хыҫĕнче ахлатни илтĕнчĕ. Пӳрнеске утмăлтурат ҫеҫкине сирчĕ те ниҫта кайса кĕрейми ҫапкаланакан лĕпĕше асăрхарĕ. Хăй шап-шурă, ҫуначĕсемпе ҫурăмĕ ҫинче вара икшер хура йĕр, ҫавăнпа Пӳрнеске ăна тӳрех палласа илчĕ: ку - Тĕпĕш ятлă лĕпĕш, леш хайхи унăн атти ҫине сăрă тăкса яраканни.

− Пулăшăр! − вăйсăрланнă сассипе тепре кăшкăрчĕ Тĕпĕш, Пӳрнескепе Мăкăнпие курсан.

− Ах, шуйттан эрешменĕ! − ҫилленсе кăшкăрса ячĕ Пӳрнеске. − Ав епле тертлентересшĕн иккен вăл манн туссене! Эрне каялла вăл ман ҫурта та ҫапла хăй картипе хупăрласа илесшĕнччĕ. Ун чухне эпĕ унăн мĕнпур картине ҫĕмĕрсе тăкрăм, хăйне утрав ҫинчен яланлăхах хуса ятăм. Кунта унăн юлашки карти юлнă пуль-ха.

− Пулăшăр, ҫăлăр! − хăйăлтатса сасă пачĕ каллех лĕпĕш.

− Пулăшăпăр, пулăшăпăр, лĕпĕш тусăм! − терĕ ăна лăплантарса Пӳрнеске, унтан Мăкăнпие чĕнчĕ. – Эсĕ эрешмен картине ҫав енчен ват, эпĕ ку енчен кĕрсе ҫĕмĕрем.

Мăкăнпи калаҫă-калаҫа эрешмен картине тăпăлтара пуҫларĕ:

− Ан пултăр эрешмен карти ҫĕр ҫинче. Ан пултăр! Пӳрнескепе Мăкăнпи питĕ маттур ĕҫлерĕҫ, вĕсем эрешмен картине ватса тухрĕҫ те лĕпĕше танатаран хăтарчĕҫ.

− Тавтапуҫ сана, Пӳрнеске. Тавтапуҫ сана, Мăкăнпи. Тавтапуҫ сире, тусăмсем, − вĕҫĕмсĕр тав тума тытăнчĕ инкекрен ҫăлăннă лĕпĕш. − Хăтартăр мана танатаран. Юрать-ха, тискер эрешмен хăй килсе ҫитеймерĕ, атту эпĕ сире курайман та пулăттăм.

− Ҫук, ҫук, ырă тусăм, эрешмен пирки ан шухăшла, – лăплантарма васкарĕ ăна Пӳрнеске. – Эпĕ ăна утрав ҫинчен хусах ятăм. Текех вăл пирĕн утрав ҫине килес ҫук ĕнтĕ. Вăл текех...

Анчах вăл калас сăмахне те вĕҫлеймерĕ, сасартăк ҫилĕллĕн кăшкăрни илтĕнсе кайрĕ:

− Хурах! Хурах! Ҫаратрĕҫ мана! Ҫаратрĕҫ... Утрав ҫине эрешмен ăшталанса чупса тухрĕ.

− Ку лĕпĕш ман танатана лекнĕ. Ман чура вăл. Парăр мана хам чурана! Парăр! − кăшкăрма тытăнчĕ вăл.

Лĕпĕш, хăраса ӳксе, Мăкăнпи ҫумне йăпшăнчĕ.

− Пӳрнеске, ан пар лĕпĕше ҫав тискер эрешмене! – кăшкăрчĕ Мăкăнпи. – Ан пар!

− Хăратăп, хăратăп эпĕ эрешменрен! – тесе лĕпĕш çаплах Мăкăнпи çумнерех йăпшăнчĕ.

− Ан хăра, лĕпĕш. Ан хăра, эпĕ пур чухне сана никам та кӳрентереймĕ! – терĕ те Пӳрнеске, хĕçне хытăрах çатăрласа тытса, эрешмен еннелле ярса пусрĕ.

− Хурах! Çаратрĕç мана! – çаплах кăшкăрса тăчĕ лешĕ.

− Халех тасалнă пултăр кунтан! - хушрĕ ăна Пӳрнеске. – Асту, эрешмен. Юлашки хут калатăп сана! Тасал ман куç умĕнчен. Тепре тĕл пулсан, пуçна касса тататăп.

− Хурах! – кăшт каялла чакса паçăрхинчен те хытăрах кăшкăрма тытăнчĕ эрешмен. – Ырăпа калатăп сана, Пӳрнеске, пар ман танатана лекнĕ лĕпĕше!

Ку Пӳрнескене питĕ тарăхтарса ячĕ:

− Эс тата хăратса тăратăн-и-ха! − кăшкăрса ячĕ те вăл эрешмен енне хĕçĕпе сулса ячĕ.

Лешĕ чул хыçне тарса ӳкрĕ те шыв еннелле çил пек сăптăрчĕ.

− Асту, Пӳрнеске, эпĕ сана аса илтерĕп-ха! – кăшкăрчĕ аякран. − Хама кӳрентернине манмастăп эпĕ! Асрах тыт, тавăратăпах сана куншăн!

Анчах Пӳрнеске эрешмен хăратма пăхнине пĕрре те шута хумарĕ, вăл кăшкăрашнине хирĕç кулса çеç ячĕ. Чăннипех те хăйĕн утравĕ çинче вăл никамран та хăрамасть. Ырă пукане Мăкăнпипе лĕпĕше аллинчен тытрĕ те вĕсене хăй килнелле çавăтса кайрĕ, хуллен юрлама тытăнчĕ:

*Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать те,*
*Шанкăр-шанкăр шыв юхать.*
*Шăнкăрч чĕппи шыв ĕçет те,*
*Шăнкăрч чĕппи шыв ĕçет...*

Мăкăнпипе Тĕпĕш те пĕрле хыттăн юрлама тытăнчĕç:

*Ян-ян каять, сас каять те*
*Ян-ян каять, сас каять.*
*Пирĕн маттур саса ку та,*
*Пирĕн маттур сасă ку.*
*Пӳрнескепе тусĕсем те,*
*Пӳрнескепе тусĕсем*
*Пĕрле вăйă выляççĕ те,*
*Пĕрле вăйă выляççĕ.*
*Тус-йыш пĕрле пулнă чух та,*
*Тус-йыш пĕрле пулнă чух,*
*Пире тăшман хăруш мар та,*
*Пире тăшман хăруш мар...*